Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 82 (4651) | *1998 çулхи июль (утă) уйăхĕн 22-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Çĕр ĕçченĕшĕн яваплă вăхăт çитрĕ

*"Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет*

Районти тырă ÿстерекенсемшĕн чи пысăк тĕрĕслев - тухăçа пухса илмелли тапхăр çитрĕ. Кăçалхи типĕ условисенче тырçи кăткăс та икĕ хут яваплă пулĕ - тырпула тăккаламасăр вырса пухмалла кăна мар, улăма та пĕр пĕрчине хăвармасăр пуçтармалла. Яланхи пекех, çав яваплă тапхăрта ял ĕçченĕсене МТСри "Кейссен" тата "ДОНсен" экипажĕсем пулăшаççĕ,çак кунсенче вĕсенчен пĕрремĕшĕсемпе уйрăмах тухăçлă усă кураççĕ.Ĕнерхи кун тĕлне 15 хуçалăха яхăн тырçине пуçăннă. Мичуринецсем, вырмана чи малтан тухнăскерсем, кĕрхи культурăсене - 270 гектар çулма, вĕсенчен çуррине ытла çапма ĕлкĕрнĕ. "Татарстан" ĕçченĕсем те тырçи кампанийĕн пĕрремĕш кунĕсенченех пысăк хăвăртлăх илнĕ - пĕр кунра 160 гектар çинче ĕç пурнăçласа, 220 гектар çинчи тырра пухса кĕртнĕ. Хафизов ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче ĕнерхи кун тĕлне тырă уйĕсене 100-120 гектар çулнă. Маларахри çулсенче Ялавăр кусчĕн тырпула пуçтарма кая юлса тытăнакан хуçалăхĕсенчи хирсенче комбайнсем ĕçлени те савăнтарать, нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче, "Урпяк", "Игенче" ассоциацисенче те çулнă тырă лаптăкĕсем хушăнаççĕ. Тырпула паккусенчен тата тÿрех çулса пухса илессинче кĕрхи культурăсене вăрлăхлăх пухса илессине хăвăртлатассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Кĕрхи культурăсем акма 6 пин ытла гектар хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕн кооперативĕсем кăçал уйрăмах активлăх кăтартаççĕ, унта палăртнă лаптăксен иккĕ виççĕмĕш пайне ĕçлесе хатĕрленĕ ĕнтĕ. Кÿршĕри РСУн хушма хуçалăхĕнче вара ку ĕçе пуçăнаççĕ çеç-ха. Тĕслĕх вырăнне кÿршĕллĕ ытти хуçалăхсене илсе кăтартма пулать. Çурхи культурăсенчен пушаннă хăш-пĕр хирсене паянах сухалалма май пуррине шута илсен, (сенаж хывмалли хутăш куăксем акнă анасем те пушанаççĕ), кĕрхи культурăсем акма тăпра хатĕрлес ĕç халлĕхе тивĕçлĕ шайра мар-ха. Сенажа илес пулсан, ĕнерхи кун тĕлне ăна 14 пин тонна яхăн, утă - 10 пин тонна ытла хатĕрленĕ. "Кондурча" хуçалăхра сĕтеклĕ апатсен запасĕ чи нумай - 2300 тонна ытла шутланать, урăхла каласан, кирлин иккĕ виççĕмĕш пайĕ чухлĕ хатĕрленĕ, Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Дуслык", "Урпяк" хуçалăхсенче те запас сахал мар. "Родина", "Комбайн", "Тĕрнеç" тата "Игенче" ассоциацисем вара ку тĕлĕшпе мухтанма пултараймаççĕ.

## Штаб канашлăвĕнче - çивĕч ыйтусем

Район администрацийĕ çумĕнчи штабăн тунтикун иртнĕ черетлĕ канашлăвĕнче çивĕч ыйтусене пăхса тухрĕç. Штаб ертÿçи - район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин выльăх апачĕсем хатĕрлессине хăвăртрах иртермеллине, кĕрхи ака валли тăпра хатĕрлессине хăвăртлатмаллине тата ăна пысăк пахалăхпа иртермеллине, çав вăхăтрах кĕрхи тата ир ĕлкĕрекен культурăсен тухăçне пуçтарма тытăнмаллине уйрăм палăртрĕ. Администраци пуçлăхĕ шефла предприятисемпе организацисем çуллахи-кĕркуннехи тапхăрта хуçалăхсене техникăпа тата ыттипе пулăшмаллине, çак хĕрÿ ĕççи вăхăтĕнче вырăнти самоуправлени органĕсем те аяккинче юлмалла маррине, хирсен культурине лайăхлатассине, çулсемпе хирсен, ялсен хĕррисене çумкурăкран тасатассине, хирсене выльăхсене таптаттармалла маррине пысăк тимлĕх уйăрмалли çинчен каларĕ.

Çаплах штаб канашлăвĕнче районăн социаллă пурнăçĕпе тата экономикипе çыхăннă ыйтусене, тĕпрен илсен, газификаци хăвăртлăхне, çул-йĕрсем хывнин пахалăхне тĕп тимлĕхре тытмаллине пăхса тухрĕç. Администраци пуçлăхĕ финанспа бюджет дисциплинин тата ытти ыйтусене те хускатрĕ.

## Пирĕн представитель - малтисен шутĕнче

Иртнĕ эрнере Мамадăш районĕнчи "Мамадăш" племзавод бази çинче кĕтĕве çĕнетекен технологсен республикăри конкурсĕ иртнĕ. Пирĕн район чысне "Черемшан" хуçалăхри Мунир Халиуллин хÿтĕленĕ.

Ятарлă пĕлÿ туяннă, пуян опыт пухнă Мунир 4 тапхăрпа иртнĕ конкурсра 100 очкоран 92-шне пуçтарса 7-мĕш вырăн йышăннă. Хуçалăхра кĕтĕве çĕнетес , выльăха искусственнăй майпа пĕтĕлентерес ĕçе тивĕçлĕ шайра илсе пыракан специалист республика ăмăртăвĕнче те хăйне лайăх енчен çеç кăтартнă.

## Ăшшăн саламлатпăр!

РФ Президенчĕн Указĕпе "Татнефть" акционер обществин нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин начальникне Марат Мухлисович ХУЗИНА "Раççей Федерацийĕн нефтьпе газ промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят панă.

## Мичуринецсем тырçине тухнă

**Çĕр ĕçченĕсем ун тĕлне çулталăк тăршшĕпе хатĕрленеççĕ. Тăпрана ĕçлесе хатĕрлеççĕ, удобрени кĕртеççĕ, акаççĕ, акнă анасене пăхаççĕ, сатăрçăсемпе çумкурăксене пĕтерес тесе тăрăшаççĕ. Акă тырпул пухса кĕртмелли вăхăт та çитрĕ. Кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнче тырçие çĕкленÿллĕ кăмăлпа тата пысăк шанăçпа тытăннă. Тырçи çинчен пĕрремĕш репортаж та шăп кăна çак хуçалăхран.**



Н.Бакиров Р.Халиуллин пулăшаканпа пĕрле.







С.Николаев Д.Саврандейкин пулăшаканпа пĕрле.

Кĕрхи туллăн уйне пĕрремĕшĕсем пулса МТСран килнĕ икĕ "Кейс" тухнă. Комбайнерсене те эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр: пĕр экипажа Фанис Гаязов ертсе пырать, теприне - Набиулла Бакиров. Çанталăк заказ панă пекех, хĕвеллĕ те ăшă. Владимир Тимофеевăн КамАЗ кузовне часах пĕрремĕш ылтăн пĕрчĕсем шыв пек юхма тытăнчĕç. Çĕр ĕçченĕсем, кăçалхи типĕ çул тулă мĕнле çитĕнессе хумханса кĕтекенскерсем, тухăçа шутлама тытăнчĕç: кашни гектартан вăтамран 18,20 центнер тухать пек, кăçалхи çула кура ку япăх мар, тесе пĕтĕмлетрĕç тырпул ÿстерекенсем. "Çак 150 гектар йышăнакан таса çĕртме хирĕсенчен гектар пуçне 50-60-шар центнер илме шутланăччĕ", - тет хуçалăх ертÿçи И.Н.Мухамметов.

Çапла шутлама сăлтав та пур: кунти хире виçĕ хутчен тĕплĕн апатлантарнă, тырă пуссинче çумкурăксем курăнмаççĕ. Кăçал лайăх пахалăхлă вăрлăхсем кăна, пĕрремĕш репродукцири мироновская сортлă тулă акнă. Мĕн тăвăн, çулталăкпа çулталăк пĕр пек пулмасть ĕнтĕ, çавăнпа та пăшăрханса ÿкмелле мар, ÿстернĕ тухăçа вăхăтлă пухса кĕртме тăрăшмалла. Хуçалăх механизаторĕсем шăп çавăн пек шухăшлаççĕ, анчах та вĕсен çĕрĕ çине американецсен хăватлă комбайнĕсем килни çĕр ĕçченĕсен кăмăлне пăснă пулас, мĕншĕн тесен мичуринецсем тырпула яланах хăйсен вăйĕпе пухса илнĕ вĕт. Хуçалăх комбайнерĕсем васкамасăр, пĕрин хыççăн тепри хăйсен хирĕ еннелле каяççĕ. Çапла, Станислав Николаев, Геннадий Васильев хăйĕн ывăлĕпе СК-5 комбайнсемпе, Анатолий Ефимовпа Исай Ермуллин тата Андрей Вартан ЖРБ-семлĕ КПС-5 агрегатсемпе. Виççĕмĕш кун кăнтăрла тĕлне 150 гектар çинчи тулла пухса илнĕ, хуçалăхра вăл пурĕ 350 гектар йышăнать. Тырра хиртен йĕтем çине Владимир Тимофеев турттарать. Кунта вара тулла тасатаççĕ те вăрлăхлăх хываççĕ. Вăрлăх материалне хатĕрлес ĕçе Сирос Матвеевпа Гулярди Кульметьева шанса панă.

Хуçалăх виççĕмĕш çул ĕнтĕ хăйне валли вăрлăх çителĕклĕ чухлĕ хатĕрлесе хăварать, ытти хуçалăхсем валли те юлать. Кăçал вара ку ĕçе тата та ытларах тимлĕх уйăрĕç.

- Тухăç лайăх пуласси тăпрана кирлĕ пек ĕçлесе хатĕрленинчен кăна мар, паха вăрлăх акнинчен те килет вĕт. Эпир вăрлăхсен сорчĕсене çулсерен çĕнететпĕр. Кăçал кĕрхи тулла, ыраша çĕнĕ сортсене хушса акнă лаптăксене тата та анлăлатма шутлатпăр, - тет Ильяс Нургалеевич. - Кăçал, тулăпа танлаштарсан, ыраш ăнса пулчĕ, ăна ытларах акнă хуçалăхсем тупăш та чылай илĕç. Тулă хирĕнче икĕ çаврăм çаврăнчĕç те, "Кейссем" ыраш хирне кайрĕç, ăна хăватлă техникăна пухса кĕртме йывăрах мар.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

# Вăхăтпа тан

***Июлĕн 22-мĕшĕнче тутар чĕлхипе литературин, наци культурин паллă ученăйĕ, Раççей Федерацийĕн гуманитари наукисен Академийĕн академикĕ, писатель тата Тутарстан Республикин обществăлла деятелĕ, пирĕн ентеш Талгат Набиуллович ГАЛИУЛЛИН 60 çул тултарать.***



Юбилей

Литература критикĕ, писатель тата литературовед Талгат Набиуллович Галиуллин 1938 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче Тутарстанти Нурлат районĕнчи Кăчăканлă ялĕнчи пысăк, интеллигентлă çемьере çуралнă. Кўршĕ ялта, Çĕнĕ Элметре вунă класс пĕтернĕ хыççăн пĕр çулталăк хушши Свердловск облаçĕнчи Краснотуринскри заводра ĕçлет. 1954 çулта Хусанти патшалăх университетне историпе филологи факультетне тутар чĕлхипе литератури специальноçпе вĕренме кĕрет, ăна ăнăçлă вĕçлесен, 1961-1962 çулсенче, çав уйрăмрах тутар чĕлхин кафедрин ассистенчĕ пулса вăй хунă. 1962 çултан тытăнса 1965 çулччен Г.Ибрагимов ячĕпе хисепленекен чĕлхе, литература тата истори институтĕнче наука кĕçĕн сотрудникĕн тивĕçĕсене пурнăçлать.

1965 çулта Т.Галиуллина Елабугăри педагогика институтне ĕçлеме куçарăççĕ. Кунта вăл тутар тата вырăс литературипе лекцисем вулать, практика занятийĕсене илсе пырать. 1967 çултан тытăнса 1971 çулччен вĕрентў пайĕн тата наука ĕçĕсен проректорĕ пулса ĕçлет, 1971-1986 çулсенче çав институтăн ректорĕ. Вăл ертсе пынă вăхăтра институт вĕрентў, наука ĕçĕсем тĕлĕшпе палăрмалла ăнăçлăхсем тăвать, пĕрремĕш категориллĕ аслă вĕренў заведенине çаврăнать. Шăпах çак çулсенче Талгат Галиуллинăн ученăй çул-йĕрĕ çирĕпленет.

1968 çулта "Хальхи вăхăтри тутар поэзийĕ тата халăх творчестви" темăпа кандидат ĕçне хўтĕлет, 1981 çулта вара - Алма-Ата хулинче 20-30 çулсенчи тутар поэзийĕн историйĕ тĕлĕшпе доктор диссертацине.

1986-1988 çулсенче вăл Хусанти педагогика институтĕнче вырăс литературин кафедринче вĕрентет, 1988 çулхи çуркунне ăна Хусанти патшалăх университетне чĕнеççĕ, унта ăна тутар филологийĕн, историйĕн, хĕвелтухăç чĕлхисен факультетне, тутар чĕлхипе литературине вĕрентмелли методика кафедрине йĕркелеме сĕнеççĕ. Хальхи вăхăтра çак факультетăн деканĕ тата кафедра заведующийĕ пулса тăрать.

Т.Галиуллин литература критикĕ пек утмăлмĕш çулсен варринче пичетленме тытăннă. Çак тапхăрта "Казан утлары" ("Хусан çутисем") журналта Х.Гуфан, С.Хаким, И.Юзеев, Ш.Галиев, Р.Файзуллин, Р.Харис творчествине халалланă статйисем тухнă. Утмăлмĕш-сакăрвуннăмĕш çулсенче поэзи аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене палăртассине халалланă çак тĕпчевсем унăн критика статйисен "На подъеме", "Дороги вдаль зовут", "Наше время - сама песня", "Поэты и поэзия", "Продолжение", "Костер жизни" пуххисен никĕсĕ пулса тăнă. 1941 çулччен тутар поэзи аталанăвне вăл "По пути социалистического реализма" тата "Дыхание времени" монографи ĕçĕсенче кăтартнă.

Ку ĕçсен тĕп тĕллевĕ - тутар поэзийĕ ун пеккисен хушшинче пысăк вырăн йышăннине, лайăх тата вăтам творчествăри уйрăмлăха кăтартасси. Т.Галиуллин критик, преподаватель, педагог пек учительсен кадрĕсене хатĕрлессине пысăк тўпе кĕртнĕ.

Критик, ученăй-литературовед, академик Т.Галиуллин юлашки вăхăтра публицистика тата проза çине куçнă май хăйне евĕрлĕ шухăшлакан çыравçă пек çирĕпленнĕ.

Вăл хăйĕн творчествине патшалăх суверенитетне çирĕплетме тата наци культурипе чĕлхине çĕнетме халалланă. 1993 çулта тухнă "Дети времени" кĕнеки публицистика жанрĕ художество творчествипе çыхăннине кăтартать. Автор кунта хăйĕн шухăшне хăюллăн пĕлтернĕ. 25 пин тиражпа тухнă кĕнекене магазинсен çўлĕкĕсенчен хăвăрт илсе пĕтернĕ. "Обещание" (1995) "Дети времени" кĕнекин малалли, вăл ку тема тата та анлăлатать. Кунта Т.Галиуллин хăй калав жанрĕнчи пултаруллă çыравçă пулнине кăтартать ("Зять", "Спид и любовь", "Колючник" тата ыттисем; калавсенчен нумайăшне Елабугăри тапхăрпа çыхăнтарнă пулнă - иртнĕ пулăмсене кĕртнĕ ("День рождения", "Хозяин леса", "Абу" тата ыттисем).

Т.Галиуллин хăйне роман жанрĕнче те кăтартнă. "Обещание" (1996) роман, хальхи вăхăтри кăткăс ларутăрăва тĕрĕс каласа паракансккер, вулакансене килĕшнĕ. Малалли, "Петля" ятлăскер, "Казан утлары" журналта пичетленĕ хыççăн тўрех вулакансене интереслентернĕ.

Т.Галиуллин ĕçĕсене тивĕçлипе хак панă. Вăл "Хисеп Палли" орден, медальсен кавалерĕ пулса тăрать, 1993 çулта "Тутарстан Республикин наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ" ята тивĕçнĕ, 1995 çулта Раççейри гуманитари Академийĕн академикне суйланă, 1997 çулта литература енĕпе Гаяз Исхак премийĕпе палăртнă.

## Рекорда çĕнетнĕ



Куба çынни 25 çулхи Франсиско Феррера шыв айне анмалли ятарлă тумтирсĕр тата хăй çумне нимĕнле йывăр япала илмесĕр тинĕс тĕпне 67 метра çити анма пултарнă. Ку вăл Итали çынни Стефана Макулы тунă рекордран пĕр метр ытларах.

## Почтальон сумкине - парашютсăр

Нью-Йоркри Фред Дакмен почтальон пĕр ирхине хаçат-журнал, çыру салатса çўренĕ теççĕ. Нумай хутлă пĕр çурт умне çитсен вăл хăйĕн сумкине уçнă та валеçмелли çырусен пачкине кăларма тăнă. Çав вăхăтра унăн сумкине çўлтен йывăр япала ўкнĕ. Вара почтальон йывăрăша чăтаймасăр тўнсе кайнă пулать. Суймастăп: çак "темĕскер" ача пулнă иккен. Вăл аманман та. Пĕлекенсем каланă тăрăх, вăл тăваттăмĕш хутри пĕр хĕрарăм ачи. Тин урайĕнче выляса ларнă ачине почтальон сумкăра йăтса кĕнине курсан, амăшĕ тĕлĕннипе чылайччен сăмах чĕнеймен иккен.

## Шапа мĕншĕн чирлемест?

Çак ыйту тупсăмне икĕ çула яхăн сăнавсем ирттерсе, А.П.Шари Майкл Заслофф биолог тупса палăртнă. Суранланнă шапа ўчĕ антибиотик кăларса тăрать. Çавă лачакари, тĕрлĕ вырăнти таса мар шывра ўт çине лекекен микробсене питĕ хăвăрт пĕтерет.

## Хăйне евĕр футболист



Болгарири Пловдив хулинчи Родалов Николов футбол мечĕкĕпе ăна çĕре ўкермесĕр икĕ сехет те 57 минут та виçĕ çеккунт выляма пултарнă. Çав вăхăтра пултаруллă та вăр-варскер мечĕке 18110 хут урапа тапса тата пуçпа çапса илнĕ.

# Пĕлтерўсем

ЖКХ патĕнче гараж сутăнать, хаклă мар. Адрес: Школьная урамĕ, 29-15.

* * *

Усман Галимзянович Гамалетдинов ячĕпе панă документсене (права, тех.паспорт) тупакана Гончаров урамĕнчи 6-мĕш номерлĕ çурта пырса пама ыйтатпăр, парне пулать.

* * *

Упаковкăри "Свияга" холодильник сутатпăр. Телефон: 5-12-00.

* * *

Афган поселокĕнче çурт тума никĕс хывнă 10 соткăллă участок сутăнать. Телефон: 5-15-49.

* * *

Чаллăпуçĕнчи приватизациленĕ икĕ пўлĕмлĕ хваттере сутатпăр е Нурлат хулинчи пĕр пўлĕмлĕ хваттерпе (хушса тўлесе) улăштаратпăр. 2-24-10 номерпе 15 сехетчен шăнкăравласа пĕлмелле.

* * *

Апат-çимĕç комбиначĕ çывăхĕнче нўхреплĕ лайăх гараж, усă курнă "Минск" мотоцикл сутатпăр. Телефон: 2-26-97.

* * *

Хула варринчи икĕ пўлĕмлĕ хваттер, ВАЗ-2121 "Нива" васкавлă сутатпăр. Адрес: Гагарин урамĕ, 12-2.

* * *

70х190 калăпăшлă филенкăллă алăк, 1992 çулта туса кăларнă "Москвич"-21-41" сутатпăр. Телефон: 5-13-74.

* * *

Кĕленчесемлĕ чўрече блокĕсем, алăк блокĕсем сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 2-29-83, каçхине шăнкăравламалла.

* * *

Тĕп переезд патĕнчи гараж тата тасатакан сооруженисем патĕнче нўхреплĕ гараж сутатпăр. 5-14-23 номерпе 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Ватмалли, пневматикăллă МО-2м мăлатуксем сутатпăр. Хакĕ 500 тенкĕ. Адрес: Куйбышев урамĕ, 32-5.

* * *

### Ертўçĕсене пĕлсе тăма!

"Эксклюзив" ООО профлистсем хатĕрлеме заказсем йышăнать, сăрлани е цинклани кирлĕ, тăршшĕ мĕнле кирлĕ çавăн пек туса парать, çаплах валаксем тата ытти япаласем туса пама пултарать. Адрес: Советская урамĕ, 179 (53-мĕш СМУн администраци çурчĕ).

* * *

Куйбышев урамĕнчи 3 пўлĕмлĕ хваттере пĕр пўлĕмлипе хушса тўлесе улăштаратпăр. Телефон: 5-39-38 (17.00 сехет хыççăн).

* * *

"Гидросервис" "Дон", "КСК", "Полесье" комбайнсен, погрузчиксемпе катоксен ГСТ-90 гидростатика трансмиссине тĕпрен юсат[illegible] "Гидросервис" "Сельхозтеникăн" пулнă гаражра вырнаçнă. Телефон: 5-41-44,
Свидетельство 29 номерлĕ (16.56).

* * *

"Утмăлтурат" чечекĕ тĕслĕ, 1977 çулта туса кăларнă ВАЗ-2101 сутăнать. Адрес: Ленинградская урамĕ, 17-22.

* * *

Участоклă хваттере 2 е 3 пўлĕмлĕ, пур енчен те хăтлă хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Киевская урамĕ, 8-2, телефон: 5-41-73.

* * *

Икĕ çынран тăракан çемье пур енчен те хăтлă икĕ пўлĕмлĕ хваттер тара илет. Телефон: 2-28-88 (18 сехетрен пуçласа 20 сехетчен).

* * *

Тури Нурлат ялĕнчи çутçанталăк газĕ кĕртнĕ çурта (мунча, сарай пур) Нурлат хулинчи 2 е 1 пĕр пўлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Телефон: 2-24-49.

* * *

Икĕ пўлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Адрес: Красноармейская урамĕ, 27.

* * *

Тиевпе пассажирсем турттарма пултаракан çĕнĕ "Газель-2705" сутăнать. Телефон: 5-16-33.


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892: З. № 2953